Шупашкар район хаҫачĕ ✵ 1932 ҫулхи июлĕн 27-мĕшĕнче тухма пуҫланă

# ТĂВАН ЕН

147 (9137) № ✵ 2005 ҫулхи декабрĕн (раштав уйăхĕн) 21-мĕшĕ. Юн кун ✵ Хакĕ ирĕклĕ

❂ Ял хуҫалăхĕ

## ҪĔР УЛМИ ЛАПТĂКĔ ПĔЧĔКЛЕНЕТ

**Тĕрлĕ шайра иртекен канашлусене ҫĕр процент таран ăнăҫлă иртрĕ тесе пур чухне хаклама йывăртарах. Анчах агрономсен эрне кунхи канашлăвĕ тухăҫлă ĕҫлерĕ. Ăна ертсе пынă ял хуҫалăхĕпе апат-ҫимĕҫ управленийĕн пуҫлăхĕн ҫумĕ В.И.Блинов та ҫавна кĕтни тата ыйтни сисĕнчĕ, хăш-пĕр асăрхаттару та турĕ вăл.**

### Лайăх тухăҫ илес тесен комплекслăх кирлĕ

Мĕн пирки калаҫрĕҫ-ха агрономсем?.. Тĕш-тырăна кăҫал районта пĕлтĕрхинчен нумайтарах пухса илнĕ пулин те малтан палăртнине ҫитеймен. Комбайнсем кивĕ пирки ҫапса илнĕ чух тырă 30 процент таран тăкăнса юлать. Ҫапла цифра илсе пачĕ хăйĕн сăмахĕнче ял хуҫалăхĕпе апат-ҫимĕҫ управленийĕн тĕп агрономĕ А.В.Краснов. Комбайн паркĕ кивелсе пырать. Кăҫал та ҫăмăл пулман: хăш-пĕр хуҫалăхра кашни комбайн пуҫне 350 яхăн гектар лекнĕ.

Тухăҫ патнех таврăнар-ха. Ҫанталăк условине кура шар курнă тесе лаптăксене шутран кăларнă май тухăҫ пысăкрах курăннине мĕн пытармалли? Кăҫал та ҫаплах тунă. Пĕр енчен лайăх пуль-ха, анчах хамăра пĕрех улталаймăпăр.

Тухăҫăн 50 процентне минераллă удобрени витĕм кӳрет теҫҫĕ специалистсем. Кăҫал пĕр гектар пуҫне 16-17 центнер (ку действующий япала виҫипе шутласан) лекнĕ. Пĕрчĕллĕ культурăсем ҫине гектар пуҫне 70 килограмм сапакансем те пулнă. Сăмах май, килес ҫул валли туянас тесен хак хăпариччен Кирово-Чепецкри заводран илме май пур. Азот удобренийĕ 3760 тенкĕ тăрать, кăткăсси - 5150 тенкĕ.

Агрономи службин ĕҫлесе ҫитереймен тепĕр кăлтăк вăл - пусă ҫаврăнăшне пăхăнманни тата вăрлăха ҫителĕксĕр ҫĕнетни. Субсидилеме республикăран уйăракан суммăна сахал усă курнă пирки района лекмелли 810 пин тенкĕне «касса» илнĕ. Субсидие пула элитăллă вăрлăх фуражран та нумай хакла лармасть - усă курма пĕлместпĕр.

Шухăшлаттаракан тепĕр самант: ҫĕр улмипе выльăх кăшманĕн, пахча-ҫимĕҫĕн лаптăкĕ чакса пыни. «Иккĕмĕш ҫăкăр» кăҫал 484 гектар йышăннă. Икĕ хуҫалăхра кăна: Свердлов ячĕллĕ колхозпа «ЧувашАгроМаркет» компанире - 100-шер ытла гектар лартнă, «Атлашевский» кооператив темиҫе ҫул 65 гектар ҫинче туса илет. Ку культура районта кашни гектартан 115.8 центнер тухнă. Усă вырăнта туса илекен пахча-ҫимĕҫ лаптăкĕ те сахалланнă, 165 гектар пулнă вăл кăҫал. Тухăҫ - 228 центнер. Выльăх кăшманĕ 190 гектар кăна йышăннă. Пĕтĕмĕшле пуҫтарса илни 2004-мĕш ҫулхинчен 46 процент сахалланнă, лаптăк - 30 процент.

### Вăрлăхне кура ҫимĕҫĕ

Тухăҫ илес тесен комплекслă ĕҫлемелли пирки маларах асăнтăмăр-ха. Епле вăрлăх хурса хăварнă-ха районта? Вăрлăх инспекцийĕн пуҫлăхĕ Г.Е.Шингарева декабрĕн пуҫламăшĕ тĕлне кондициллĕ вăрлăх 57 процент пулнине пĕлтерчĕ. Куйбышев ячĕллĕ хуҫалăхра кăна вăл 100 процент, анчах унта мĕн пур парти - вăрлăх хутăшĕ. Апашра 96 процент, Шорчекассинче - 91 процент, Тăрăнта - 76 процент, Тутаркассинче - 74 процент. «Искра», «Букет Чувашии», «Дружба» хуҫалăхсенче кондицие ларнă вăрлăх пачах ҫук. Чурачăксен планĕ 750 центнер, анчах тĕрĕслеттерме тăратман. «Эпир туянасшăн», - пĕлтерчĕ кун пирки хуҫалăхăн агрономĕ. «Гвардеец» вăрлăх туса илекен хуҫалăх шутланать пулин те вăл ҫурри таран кăна тĕрĕслеве тăратнă, ҫав шутран 31 проценчĕ кондицие ларнă.

Уйрăм культурăсемпе илсен, тĕрĕсленинчен ҫурхи тулă 62 процент кондицие ларнă, урпа - 57 процент, сĕлĕ - 48 процент, ҫурхи вика - 42 процент, нимĕҫ пăрҫи - 71 процент. Кĕрхисене 11 хуҫалăхран 4792 центнер тăратнă, 64 проценчĕ кондицие ларнă. ГОСТ ыйтнине нӳрĕклĕх енĕпе 14 проценчĕ тивĕҫтермест, шăтаслăхпа - 7 процент, тасалăх тĕлĕшпе - 36 процент.

Пĕр сăмахпа каласан, вăрлăха аламалла та аламалла...

### Ҫĕнĕ ГОСТ ҫĕнĕлле ыйтать

Январьте вăрлăхпа ҫĕнĕ ГОСТ вăя кĕрет. Вăл требованисене хытарать. Пĕрчĕллĕ тата пăрҫа йышши культурăсенче тата викăра нӳрĕклĕх 15,5 процент пулаять. Вăрлăха зонăсемпе уйăрнă, пирĕн республика виҫҫĕмĕшне кĕрет. Кашнин хăйĕн требованийĕ. Ку пирки вăрлăх инспекцийĕн республикăри станцийĕн агрономĕ Н.А.Андреева каласа пачĕ.

### Тĕрĕслевҫĕсем хушăнаҫҫĕ

Вăрлăхпа тивĕҫлипе ĕҫлемелле. Ҫакна ветеринари тата фитосанитари надзорĕ енĕпе ĕҫлекен федераллă службăн республикăри управленийĕн ял хуҫалăх культурисен вăрлăхне тĕрĕслекен пайĕ контрольлесе тăрĕ. Вăрлăх ҫинчен калакан законодательствăна пăссан штраф та парĕҫ. Пай пуҫлăхĕ А.Н.Павлова пĕлтернĕ тăрăх, тĕрĕслевҫĕсене чăрмантарнишĕн те ачашламаҫҫĕ.

### Шăши пуҫ пулса тăрасшăн

Шăши иртĕхесшĕн. Хăйне хуҫа пек туйма ҫанталăк та май парать. Кун пирки агрономсем ӳсентăрансене хӳтĕлес енĕпе ĕҫлекен станци пуҫлăхĕ И.В.Дмитриев каланинчен пĕлчĕҫ. Кĕрхи культурăсен хăш-пĕр хирĕнче ыраш амăшĕ тĕл пулнă. Ку чирпе химилле меслетпе кĕрешнипе пĕрлех уйсен хĕррисене ҫулмаллине, унти тыр-пула уйрăм вырса илмеллине палăртрĕ Илья Васильевич. Тымар ҫĕрĕкĕ те пур-мĕн. Ҫавна пула тухăҫ 15 процентран пуҫласа 40 таранах пĕтет тенине шута илсен ҫакă агрономсене шухăшлаттармаллах.

**В.ЭВЕРККИ.**

❂ Декабрĕн 22-мĕшĕ - Энергетиксен кунĕ

### *Энергетика комплексĕнче тăрăшакан хисеплĕ ĕҫченсем!*

***Сире професси уявĕ ячĕпе саламлатăп***

***Тăван республика малалла ҫирĕппĕн аталанса пынинче сирĕн тӳпе те пысăк. Энергетиксем - яваплăха туйса, ĕҫе чунтан парăннă ҫынсем. Вĕсем пур потребительсене те пĕр чăрмавсăр, кирлĕ таран ҫутăпа та, ăшăпа та тивĕҫтерсе тăраҫҫĕ.***

***Ҫирĕм пилĕк ҫул каярах Шупашкар ГЭС-ĕн пĕрремĕш гидроагрегатне хута яни пирĕн республика историйĕшĕн питĕ пĕлтерĕшлĕ самант пулчĕ.***

***Тăван республикăна экономикăпа социаллă аталанура пысăк пулăшу кӳнĕшĕн сире тав сăмахĕ калатăп. Пурне те ҫирĕп сывлăх, ĕҫре ҫитĕнӳ, телей те ăнăҫу сунатăп.***

**Н.ФЕДОРОВ.**
**Чăваш Республикин Президенчĕ.**

### *Районти хисеплĕ энергетиксем!*

***Сире пурне те професси уявĕ - Энергетиксен кунĕ ячĕпе чĕререн саламлатăп.***

***Ҫак отрасль халăх хуҫалăхĕшĕн пысăк пĕлтерĕшлĕ пулни куҫкĕретех. Сирĕн ĕҫĕр уйрăмах паянхи кун хаклă та кирлĕ - эсир ҫынсене ăшăпа ҫутă илсе ҫитеретĕр. Йывăрлăхсене ҫĕнтерсе халăха пĕр тăтăш энергипе тивĕҫтерме тăрăшнăшăн, яваплăхăра туйса тӳрĕ кăмăлпа ĕҫленĕшĕн чĕререн тав тăватăп. Малашне те Тăван енĕмĕр ырлăхĕшĕн тăрăшса ĕҫлессе шанатăп.***

***Ăнăҫупа ҫитĕнӳ, ырлăх-сывлăх, кашни ҫемьене иксĕлми телейпе тăнăҫ пурнăҫ сунатăп.***

**А.КНЯЗЕВ,**
**Шупашкар районĕн пуҫлăхĕ.**

## *РАЙОНПА ТĔПЛĔН ПАЛЛАШĔҪ*

Паян районта черетлĕ министерство кунĕ иртет. Кун йĕркинче - тĕрлĕ ыйтусем. Пирĕн патăмăра ЧР Культура, национальноҫсен, информаци политикин тата архив ĕҫĕн министерствинчен килеҫҫĕ. Делегацие П.С.Краснов министр хăй ертсе пырать. Унпа пĕрле унăн ҫумĕсем - В.С.Бондарев, архив енĕпе ĕҫлекен управлени пуҫлăхĕ А.В.Выйкин, информаци политикин управленийĕн пуҫлăхĕ О.Ф.Петров тата ыттисем пулаҫҫĕ. Пилĕк ушкăна пайланса районти тĕрлĕ вырăнсене ҫитмелле, малтан пĕрле районти культура ĕҫченĕсемпе музейре тĕл пулаҫҫĕ.

Ун хыҫҫăн пĕрремĕш ушкăн Тутаркассинчи халăх пултарулăх ҫуртĕнче. Ял администрацийĕнче пулать, Хыркассинчи ваттисен ҫуртне ҫитет.

Иккĕмĕш ушкăн Ленин, Куйбышев ячĕллĕ хуҫалăхсенче тата Ҫатра-Хочехматри вăтам шкулта пулать. Виҫҫĕмĕшĕ Кӳкеҫри типографи тата редакци коллективĕсемпе тĕл пулать, Кăшавăшри шкулпа ваттисен ҫуртне ҫитет. Тăваттăмĕш ушкăн Тренкассинчи шкул тата «Гвардеец» унитарлă предприяти коллективĕсемпе тĕл пулать. Пиллĕкĕмĕшĕ Пархикассинчи модельлĕ библиотекăра тата Ишлейри райпора мероприяти ирттерет.

**П.ПАВЛОВ.**

## *ШУТЛАМАЛĂХ ПУР*

Шăмат кун, декабрĕн 17-мĕшĕнче, Раҫҫей Президенчĕн премине тата Чăваш Республикин Президенчĕн грантне илес шухăшлă шкулсемпе педагогсем усă уроксем пачĕҫ. Каланăччĕ ĕнтĕ, пирĕн районта 2 шкул - Тренккасси тата Кӳкеҫри лицей хăйсен кандидатурине тăратнă. Премие илме тивĕҫлĕ педагогсем те пирĕн нумай. Хальлĕхе Вăрман-Ҫĕктер, Ишек, Мамăш, Янăш, Ҫĕньял-Покровски, Шемшер, Салапайкасси, Чурачăк, Кӳкеҫри 1-мĕш номерлĕ шкулсенчен тата лицейрен пĕтĕмпе 16 конкурсҫăн урокĕсенче ашшĕ-амăшĕсем, социаллă ĕҫченсем ларчĕҫ, ĕҫсене хакларĕҫ.

Пурте ҫак наградăна тивĕҫлĕ, пурин те урокĕсем хăйне евĕр интереслĕ иртеҫҫĕ, вĕренекенсен результачĕсем те чаплă, анчах комисси пирĕн районтан 2 шкулпа 3 педагогăн кандидатурине ҫеҫ республикăна тăратма пултарать. Паллах, кунта шутламалăх пур.

**А.СУСМЕТ.**

## *ХĂЙ ТЕ ӲРКЕНМЕСТ, ЫТТИСЕНЧЕН ТЕ ҪИРĔП ЫЙТАТЬ*

**Паллă ĕнтĕ, ĕҫ тухăҫлăхĕ ăна йĕркелеме пĕлнинчен нумай килет. Пулă пуҫĕнчен ҫĕрет тенĕ пекех хăш-пĕр начар хуҫалăхсенче вăй хуракансен (пурин те тесе каламастăп) дисциплини хавшасах кайнăччĕ. Хăйсенчен ҫирĕп ыйтманинне кура ĕҫе тухсан-тухмасан та пултарнă. Хĕрӳ ĕҫҫи вăхăтĕнче яра куна сая яни те пулкалать. Нимĕнле яваплăха туймасăр ĕҫ вырăнĕнче тытăнса тăнипе кăна кунран кун хуҫалăх урапине аялала кустарнă тĕслĕхсем сахал мар.**

Кăҫал чылай йывăр лару-тăрулла хуҫалăхра ертӳҫĕ улшăнчĕ. Пĕремĕк е чĕн пушă - хăш мелпе ĕҫлессине вара кашни хăй суйларĕ. Теприсем халĕ кăтартăвĕпе мухтанма та пултараҫҫĕ. «Чурачикский» хуҫалăх ертӳҫи мĕнле ĕҫлемеллине хăй тĕслĕхĕпе кăтартать. Фуфайкăпа калушлă ҫăматă тăхăнса фермăра тислĕк тасатма та йĕрĕнсе тăмасть ертӳҫĕ. Пуринчен те ҫирĕп ыйтать, ĕҫ укҫине те вăхăтра тӳлет. Ҫавăнпа та пулĕ производство кооперативĕнче вăй хума хапăл тăвакансем те йышланнă. «Ĕҫлекен ҫук» тесе каланине пĕр председательтен кăна илтмен ĕнтĕ. Тĕрĕсех, шалу вăхăтра тӳлесен ĕҫлес шухăшлисене суйламалăх та пулĕ.



А.СУСМЕТОВА фото ӳкерчĕкĕ.

Ҫырăнтару ĕҫĕсемпе ҫӳренĕ май Е.Ф.Шалеева ĕне ферминче тĕл пултăмăр. Вăл чун-чĕрипе ял хуҫалăхне парăнни, кашни пĕчĕк ĕҫе пысăка хурса чаплăлантарма тăрăшни сисĕнчĕ. Умра ялан кантурта шур кĕпепе ларма хăнăхнă пуҫлăх мар, пурте мухтав юрри хывакан ҫĕр ĕҫченĕ, чăн-чăн хресчен. Алăпа ĕҫленипе кăна пысăк тупăш тума ҫуккине те аван ăнланать Евгений Федорович. Тӳрех виҫĕ ҫын вăйне перекетлекен арман, ĕнесене апат валеҫекен агрегат туяннă. Вăл кунта килнĕ чух 180 пуҫ мăйракаллă шултра выльăх пулнă пулсан, халĕ вĕсен хисепĕ 450-па танлашать. Сĕт туса илекен хуҫалăхсен сводкинче те Чурачăксем малти вырăнсене йышăнаҫҫĕ. Сăвакан ĕнесен йышне татах устересшĕн. Мĕншĕн тесен укҫа ҫăл куҫне шăпах сĕт парассинче кураҫҫĕ. Ферма заведующийĕ В.И.Игнатьев каланă тăрăх, выльăх апачĕ ҫителĕклĕ. Аплатăк, тăрăшса вăй хума нимĕнле пысăк чăрмав та пулмалла мар.

**А.ИЗМАН.**

❂ **Лашă вăйĕ те самаях пулăшу.**

❂ Кадрсем

## *ВĔРЕНМЕ ЙЫХРАВЛАҪҪĔ*

Иртнĕ уйăх вĕҫĕнче ЧР Ял хуҫалăх министерствипе Чăваш патшалăх ял хуҫалăх академийĕ специалистсене вĕренме тĕллевлĕ хатĕрлесси пирки килĕшӳ тунă. Ял хуҫалăхĕнче ĕҫлес шухăш пуррисене экономика, агрономи, зооинженери, механизаци факультечĕсенче кĕтеҫҫĕ.

Асăннă специальноҫран хăшĕ те пулин килĕшет тата ял хуҫалăх предприятийĕнче ĕҫлес кăмăл пулсан декабрĕн 28-мĕшĕччен районти ял хуҫалăхĕпе апат-ҫимĕҫ управленине килме сĕнеҫҫĕ. Тĕплĕнрех 2-13-50 е 2-13-48 номерлĕ телефонпа ыйтса пĕлме пулать. Куҫăмсăр майпа вĕрентеҫҫĕ. Направлени панă предприятин ҫулталăкра 4,5 пин тенкĕ тӳлемелле.

**В.ИВАНОВА.**

# КИЛТИ ХУÇАЛĂХ

## ПУТЕНЕ ÇĂМАРТИНЕ ÇИСЕ КУРНĂ-И?
### АС ТИВСЕ ПĂХĂР-ХА

Путенене эпĕ ăратлă выльăх-чĕрлĕхĕн республикăри куравĕн-че пĕрремĕш хут курнăччĕ. Çав пĕчĕк кайăкăн çăмарти те хăйне кура: вĕтĕ. Хуппи вара ванса каяссăн туйăнать, ытла та чер-чен вăл, анчах ун айĕнчи плен-ка чăтăмлă-мĕн. Йывăрăшпа 5 çăмарта пĕр чăх çăмартине ылмаштарать. Пахалăхĕпе вара чăхăниннчен те ирттерет.

«Агро-Инновации» хысна пред-приятин зоотехник-консультанчĕ А.В.Любаев пĕлтернĕ тăрăх, 5 çăмартара пĕр чăх çăмартинчен кали пилĕк хут нумайтарах, тимĕр - 3,5 хут, $B_1$ витамин - 2,5 хут. $B_2$, А витаминсем те, никотин кислотипе фосфор та, пăхăрпа кобальт та, тĕрлĕ аминокисло-тапа тата белок та путенен нумайрах. Кирлĕ микроэлемент-семпе рациона талăклăх пуян-латас тесен аслисен кунне 4-6 çăмарта, ачасен 2-3 çăмарта çимелле.

Путене çăмарти сиплĕ шут-ланать. Чылай чиртен ăна ĕçме сĕнеççĕ. Японецсем астмăран та сипленеççĕ иккен. Апельсин сĕткенĕпе хутăштараççĕ те... Тепĕр лайăх ен - путене çăмар-ти аллерги памасть кăна мар, унтан та сыватать.

* * *

**Çăмарта тенĕрен...**

**** Чăх çăмартине упрамалли чи лайăх меслет - апат тăварĕ-пе сапса хуни. Ун пек тусан хăйĕн пахалăхне вăл 2-3 уйăх çухатмасть.***

**** Шăннă çăмартана сивĕ тăварлă шыва вăрах вăхăта ярса ирĕлтермелле.***

**** Холодильникра выртнă çăмарта пĕçернĕ чух ванса каять. Анчах шыва пĕр кашăк тăвар ярсан хуппи вансан та çăмарти юхса тухмĕ.***

**** Хуппи йĕр кайнă çăмарта-на питĕ тăварлă шывра пĕçер-мелле. Анчах вĕреме кĕричче-нех ярăр.***

**** Çăмартана вăйлă çулăм çинче пĕçерсен унăн шурри çирĕп пулать, сарри - çемçе-рех. Майĕпен пĕçерсен, шур-ри - çемçе те сарри - çирĕп.***

**** Сивĕ шыва ярсан пĕçернĕ çăмартан хуппи лайăх шуралать.***

**** Вăйсăр çулăм çинче ăша-ланă çăмарта вăйли çинче ăша-ланинчен самай тутлăрах.***

❂ Саппас пурри лайăх та...

## МАЙНЕ ПĔЛСЕ УПРĂР

**Строительство материалĕ йÿнĕ мар та, чылай çын ăна пĕчĕкшерĕн хатĕрлесе хума тăрăшать. Анчах нумай вырт-нипе вăл лайăхланса тăмасть. Пирĕн çак сĕнÿсемпе усă кур-сан сая кайрĕ тесе пăшăрхан-ма тивмĕ.**

**Йывăç-чус таврашне** купаласа хунă чух рет хушшине мĕн те пу-лин хума ан манăр. Çиелтен кивĕ линолиумпа е рубероидпа витмел-ле. Урамра хĕл каçармасан аван-рах, паллах. Анчах сарайĕнче тăра-кан типсе çитмен йывăç витнĕ ма-териал айĕнче хуралса кайма пул-тарать.

**Цемента** вара стройка пуçлич-чен пит нумай маларах туянса ху-малла мар, мĕншĕн тесен темле лайăх упрасан та вăл хăйĕн çирĕп-лĕхне уйăхсерен 4-6 процент çухатса выртать. Хĕлле йÿнĕрех тесе илсе хутăр пулсан, ун çине нÿрĕк ан лектерĕр. Полиэтилен хутаçа ярса анине лайăх çыхса лартăр.

**Рубероида** тăратса купалăр. Ахальлĕн ăна çуркунне сÿтме йывăр килĕ. **Утеплителе** ăшă типĕ çур-тра хĕл каçармалла. **Чÿрече рами** те ăшă та типĕ вырăнта упранма тивĕç.

**Пăта, шуруп ытти вак тимĕр-тăмăра** упрасси тем мар пек. Анчах калама кăна. Тимĕр-тăмăр нÿрĕкрен питĕ хăрать. Ăна тутăх-тармасăр упрас тесен типĕ çурт-ра вырăн тупăр.

**Кантăк** сивĕрен хăрамасть, ан-чах ванасран лайăх хурăр. Ăна чалăштарса тăратма сĕнеççĕ, айне резина прокладка хумалла.

**Сăрă, олифа, растворитель** ăшă вырăна юратаççĕ.

## АЛĂ ВЫРĂННЕ УРАПА ПОЛИРОВКĂЛАТПĂР

Паркет урая лакпа ви-тиччен полировкăламалла. Алăпа хырса тăма пĕртте çăмăл мар. Урапа пусăрăн-тарма вара ансатрах тата вăйлăрах та пусăрăнать. Урăра кеда тăхăнăр, мате-риал ура айĕнчен тухса ан тартăр тесен шкуркăн тепĕр енне клей сĕрĕр.

## ТИП ÇУ ПОРОШОКПА ТАСАЛАТЬ

Тип çу е консерв çăвĕ çи-пуç çине тăкăнсан ăна çийĕнчех тасатмалла. Шăл тасатмалли порошок сап-са лайăххăн сăтăрмалла. Çăва туртса илсен тасат-малла, кайран каллех сапса сăтăрмалла. Çăва туртми пулнă хыççăн тепре сапăр та темиçе сехет ан тĕкĕнĕр. Унтан ăна щет-кăпа тасатса ярăр.

Пăнчă кайса пĕтмесен тасатнă скипидарпа е бен-зинпа хутăштарнă çĕр улми çăнăхĕпе ик енчен сĕрсе хурăр. Чуста хытса ларсан ăна щеткăпа та-сатса илмелле.

❂ Усăллă канаш

## ЧŸРЕЧЕ КАРРИ ИНТЕРЬЕРПА КИЛĔШСЕ ТĂТĂР

**Килти чÿрече карри йăлăхтарса çитерчĕ. Материалĕ те, тĕсĕ те килĕшми пулчĕ. Обоя улăштармасăрах урăх тĕслĕ карă илсе çаксан хитре пулмасть пуль тетĕп.**

**М.ВАСИЛЬЕВА.**

Енчен эсир нумай хутлă çуртра, çÿлти хутра, пурăнатăр пулсан тюль çакнипех çырлахма пулать. Пĕр ен-чен вăл модăран нихăçан та тухман, тепĕр енчен халь малтанхилле шурă тĕс кăна сĕнмеççĕ прозводительсем. Темиçе тĕспе ялтăртатса тăраканни-сем те аплипех.

Штора кирлех пулсан пусма кăнтăрла та, каçпа та пĕр пек хитре курăнсан аван. Муслин, сăмахран, хĕвел çутине витĕр ярать, тĕксĕм кантăк евĕр туйăнать. Каçпа, çутă çутсан, витĕр кăтартмасть.

Пусма интерьерпа хутăшса кай-малла мар. Вăл унтан пĕрер тон çутăрах е тĕксĕмрех пулсан лайăх. Шторăна обой тĕсне кура мар, сĕтел-пукана пăхса суйлаççĕ. Урлă ÿкерчĕклĕ контарстлă карă стенана «сарса» ярать, вертикальлĕ йĕр стена çÿллĕшне вăрăмлатать. Кăвак, сăрă, хĕрлĕ кăвак тон усăлтаракан эффект парать, çутă хăмăрпа хĕрлĕ тĕс ăшăтать.



Çутă штора хитре-ха, анчах ăна интерьерпа килĕштертерме çăмăл мар. Хĕвел çутине тытса чаракан йывăр, хулăн карăна кăнтăр енне пăхакан чÿрече çине çаксан лайăх. Пусма туяннă чух унăн тĕсне, текстурине, чечеке суйланипе пĕрлех сăрлани çирĕп ларнипе ларманнине, тусана хăй патне туртса илесрен ятарлă хутă-шпа сĕрнине шута илĕр.

❂ Халăх медицини

## ШĂННИНЕ ТĂВАР ИРТТЕРЕТ

**Хĕллехи вăхăтра шăнса пăсăлма часах. Анчах чиртен кирек епле килте те пур йÿнĕ япалапа - тăварпа сипленме пулассине пĕлетĕр-и-ха эсир? Апла, ас туса юлăр. Ку меслетсем чир шала кайиччен вырăнлă.**

***❂ Тăвара çатма çине хурса хĕртĕр, пусмаран çĕленĕ хутаçа ярăр та шăннă çыннăн ури çумне тытăр. Ăшăнса иличчен тата лайăххăн тарличченех çапла лармалла.***

***❂ Çăм нускине тăварпа лайăххăн йăвалăр та чирлĕ çынна тăхăнтартăр. Ура тĕпне те, рефлексогенлă зонăна та лайăх витĕм кÿрет.***

***❂ Шала кайнă сунас е бронхит чухне пĕр килограмм вĕри тăвара 3-4 апат кашăкĕ горчицăпа хутăштарăр, хутăша шыва ярса пăтратăр та ун ăшĕнче сивĕниччене ура (пир-авăр нуски тăхăнма ан манăр) тытăр. Ку процедурăна кунне 6-7 хут тумалла.***

❂ Килти выльăх-чĕрлĕх

## СЫСНА ТĂВАР ЮРАТАТЬ, АНЧАХ - ВИÇЕЛЛĔ

Ялта уйрăм хуçалăхра сысна усраман çын çук пуль. Анчах çакăнта пĕр япала пирки асра тытмал-ла. Сысна тăвар тутине питĕ уять иккен. Пĕрисем тăварлăрах юратаççĕ, теп-рисем - сахал пулсан. Апата тăвар янă чух сыс-на виçине шута илмелле: 120 килограмм таяканни-не талăкне 14 грамм кирлĕ, 240 килограмран пысăк-раххине - 20 грамм.

Тăвар ытлашши парсан сысна наркăмăшланма пул-тарать. Ун пек чух вăл хăйне канăçсăр тытать, сĕлеке юхтарать, варĕ пăсăлать, мышци чĕтре-нет, хăлхипе сăмси кăва-карса каяççĕ. Капла пул-са тухсан ветеринари врач-не чĕнмех тивĕ. Вăл кил-се çитиччен таса шыв 1-3 литр памалла. Пурă яма сĕнеççĕ, мĕншĕн тесен вăл тăварпа пĕрле организма ытлашши лекнĕ натрие шайлаштарать.

**(Материала «Агро-Инновации» сайтĕпе усă курса хатĕрленĕ).**

❂ Перекетлисен кĕтесĕ

## САХАЛ ТĂКАКПАХ - ЮСАВ

**Юсав ĕçне пусăнма мĕн хăратать-ха пирĕн-тен чылайăшне? Ал пĕлменни-и? Çук-ха, ăна-кăна чухлакалатпăр-ха. Тĕрĕс тавçăртăр: укçа ыйтăвĕ. Çавă ĕнтĕ пур çĕрте те такăнтара-канни. Анчах нумай тăкакланмасăр та хăш-пĕр япалана çĕнетме пулать иккен.**

### Чÿрече кантăкĕ ваннине

Чÿречĕ кантăкĕ çинче йĕр кайнă пулсан унăн тул енне тĕссĕр çилĕм сĕрсе хурсан та пĕр шухăшсăр ик-виç çул пурăнайăр.

### Мачча çурăкĕ сапланать

Мачча çинчи йĕрсене столяр çилĕмĕпе тата шăл тасатмалли порошокпа саплама пулать. Хăйма çăралăхĕ таран ирĕлтернĕ клея порошокпа хутăштарса çурăка сапса тухăр. Айккине тухса кайнине тасатса илĕр.

### Плиткăна сăрăпа çыпăçтарма юрать

Вистеннĕ плиткăн цеметне лайăх тасатса илĕр, ăна çуллă сăрпа сĕрĕр те стена çумне лайăххăн тыттарăр.

### Крахмал çилĕмрен кая мар

Крахмала пĕр стакан сивĕ шывра лайăххăн ирĕлтермелле. Вăл кисельтен кăшт çăрарах пултăр. Кайран ăна 5-6 литр вĕрекен шыва ярса лайăх хутăшиччен пăтратса тăмалла. Вĕретме кĕртмел-ле мар. Хутăш сивĕннĕ хыççăн клей хатĕр те.

❂ Ыйту - хурав

## РЕЗИНА ВЫРĂННЕ ГЕРМЕТИК

**Пĕтĕмпех йĕркене пăхăнса тунă тейĕн: ши-фер пăти айне çирĕплетме шайбăпа усă куртăм, пăтине хăйне тĕпек тăхăнтартрăм. Çапах та вăхăт иртнĕçемĕн çапнă вырăнтан шыв юхтарма пуç-ларĕ. Ăçта тĕрĕс мар турăм-ши?**

**С.Петров.**

Шифера пăта çапнă вырăнтан шыв кайма пуçласан резина прокладка чылайăха пулăшу кÿреймĕ. Автомобилĕн типмен герметикĕ кун пек чух вырăнлă. Тата шанчăкăрах пултарас тесен пăта пуçне те герметикпа витĕр.

❂ Хитре пулар-и?

## СКАКАЛКА ТРЕНАЖЕРТАН КАЯ МАР

Эх, укça пулсанах (е хулара пурăнсанах) тре-нажер залне çÿренĕ пулăттăм та тесе кулянакан çынна лăплантарма тивĕç ку канаш. Чи йÿнĕ тренажер - скакалка. 20 тенкĕ те тăмасть вăл. Кăштах начарланас тетĕр пулсан çавна туянăр та кунсерен сикме пуçлăр. Заняти валли виçĕ минут



В.ИВАНОВА фото ÿкерчĕкĕсем.

уйăрсан та ним туманни мар.

Ура мышцине вара картлашкапа улăхни тата анни çирĕплетет. Ытлашши калорие те кăштах пĕтерет вăл. Пирĕн çуртра лифт çук çав тесе кулянмалла мар, савăнмалла. Çÿлелле улăхни мышцăн пĕр ушкăнне çирĕплетет, аялалла анни - теприне.

## ТĂКĂННИНЕ МАССАЖПА

Çÿçе хăвăрт тата çăра ÿсме пулăшакан хатĕр - куршанак çăвĕ. Унпа, икĕ эрнере пĕрре те пулин çăвас умĕн пĕр-ик сехетлĕхе сĕрмелле.

Тăкăнма тытăнсан пуçа массаж тума пулать. Ятарласа кăларнă щеткăпа енчен енне 5-10 ми-нут таран тураса якатмалла.

❂ Сире валли, пахчаçăсем

## ТЕМИÇЕ СОРТА ПĔРЛЕШТЕРСЕН - ГИБРИД

**Вăрлăх илме тăрсан ку вăл гибрид тесе калаççĕ хăшĕ-пĕрне. Мĕн япала вăл?**

Гибрид тесе икĕ е темиçе сортран туса кăларнă вăрăран çитĕнтернĕ ÿсен-тăрана калаççĕ. «Вăрă хутаççи çинче «FI» тесе палăртаççĕ. Анчах гиб-ридран вăрлăх тăваймастăн (пахалăхĕпе вăл амăш вăрлăхĕн евĕр пулать)»,- терĕç ÿсен-тăрансене хÿтĕлес енĕпе ĕçлекен районти станци специа-лисчĕсем.

**Страницăна В.ЭВЕРККИ хатĕрленĕ.**

**Ева Лисина**

## ВĔÇЕКЕН КӲЛĔ

*КАЛАВ*

**(Малалли. Пуçламăшĕ иртнĕ номерте.)**

Хуралтăсем тăр-тăр-тăр чĕтренеççĕ. Пĕтĕм йывăç шатăртатса авăнать. Кӳлĕ енчен шапăр-шапăр! каш-каш! туни илтĕнсе тăрать. Улăм витнĕ пӳрт тăрри кашăлл! çĕкленет те лашш! каялла анса ларать. Асатте пĕр юпаран çатăрласа тытнă та ни вилĕ, ни чĕрĕ тăрать. Каш-каш! тăвать çӳлте шăваканни, чашш! чашш! сапать сивĕ шывпа. Чыхăнса вилсе выртманни кăна ĕнтĕ асаттен. Ак пӳрт тăрри тепре хашăлл! шăтăр-шатăр! тăвать те, темскер лапсăркка йĕпе капан евĕрлĕскер, асатте çумĕнченех шуса иртет иккен çав вăхăтра.

Тавралăх усăла пуçлать майĕпен. Кашлани-чашлани лăпланать, ушкăн-ушкăн хуркайăк вĕççе иртнĕ пек, вăй-вăй-вăй тени çеç илтĕнсе тăрать. Ак, пĕтрĕ пуç! Асатте лачăрах каять - пӳрт тăрри ăçта вĕсен? Çемйи уласа йĕрет. «Халь кăна витрĕмĕр-çке, халь кăна витрĕмĕрçке!» - макăрать ман асанне. Урамра халăх шавлать: «Мĕн пулнă?» та «Мĕн пулнă?»

Ак, ял хĕррине чупса тухаççĕ. Айтурах! Пирĕн кулĕ ăçта? Пирĕн вăрман ăçта? Хăшĕсем сăхсăхаççĕ, теприсем хĕвеле пуççапаççĕ.

- Пирĕн кӳлĕ вĕççе кайнă вĕт!- тесе кăшкăрса ярать те ман асатте çĕре тĕшĕрĕлсе анать.

- Пĕтрĕмĕр! Пĕтрĕмĕр! Ырра мар Ку! - хуйхăрать пĕтĕм халăх.

Ак тата! Сулахай Киркки (ман Эверкке кумăн аслашшĕ пулать ĕнтĕ вăл!) пĕтĕм çемйипе хурах кăшкăрса чупать. Арăмĕ ачине йăтнă, тепри, амăш аркинчен çакланса, хыçран сĕтĕрĕнсе пырать. Сулахай Киркки куççульпе макăрать.

- Ял-йыш! Пире килтен хăваласа кăларчĕç!

- Камсем?

- Пĕлместпĕр! Маччана çĕмĕрсе кĕчĕç! Аран тухса тартăмăр! Пулăшсамăр!

Халăх пуртă-сенĕк йăтать те Сулахайсем патне ыткăнать. Йăпшăнса пырса, пĕри чӳречерен пăхать.

- Мĕн унта?- ыйтаççĕ ыттисем.

- Урайĕнче сысна выртать!

- Сысна?!

- Тăватă урине те хуçнă - тăраймасть!

- Сысна мар ĕнтĕ вăл! Пирĕн сыснасем маччаран сикмеççĕ!

Хăшпĕрисем сехри хăпнипе каялла тараççĕ. Хăюçахсем çеç тăрса юлаççĕ. Шалтан хашш! хашш! сывлани илтĕнет.

- Ури çине тăриччен кĕрер пуль! - тет пĕри, чи хăюлли.

Йăпшăнса-йăпшăнса пыраççĕ те алăка ярр! уçса яраççĕ. Урайĕнче виçĕ çулхи мăнтăр сысна пек пулă выртать! Сулахайсен пӳрт тăррине çĕмĕрсе, маччине шăтарса урайне ӳкнĕскер! Пулли сухине хускаткаласа хашш! тăвать те, çынсем кăпăр-капăр каялла чакаççĕ, çакăнса тăракан сăпка маччана çити сикет.

Пусас ку пулла!- тет хайхи Сулахай Киркки.

- Ах, Киркка, пĕчĕк ачусене те пулин хĕрхен, ан тив, ан тив ку пулла, тем курса тăрăпăр!- йĕре-йĕре ӳкĕтлет ăна арăмĕ.

Ыттисем те çак ăслă арăм майлă.

- Вĕрентсе ан тăрăр! Кунта эп хуçа, пулă ман урайне ӳкнĕ, мĕн тăвас теп - çавна тăвап! - хивреленет Сулахай. Никама та итлесшĕн мар этем - туххăмрах пуйма шут тытнă пулĕ çав! - Пĕр шетник пулă тăварласа лартап!- тет те çĕçĕ туртса кăларать.

Мăнтарăн пулли! Темиçе сехет шывсăр выртса халсăрланнă ĕнтĕ вăл - хăштик-хăштик сывлать. Паттăрланса çитет Сулахай, пулла сухинчен ярса тытать.

**(Малалли пулать.)**

❂ Ачасен пултарулăхĕ

## МАН ЮРАТНĂ ЯЛĂМ

Пирĕн ял мĕнле пулса кайнă тата тăван несĕллĕх çинчен мĕн паллă? Çак ыйтусем кашни ачанах хумхантармалла. Манăн яла Анаткас Тăрăн теççĕ. Унăн историйĕ интереслĕ. Питĕ улах вырăнта вырнаçнă вăл - тарăн çырман çӳллĕ тĕпекĕнче. Йĕри-тавралла çырмасем, улăхсем, уйсем сарăлса выртни курăнать. Ялăм вăрмансем хушшинчерех ларать. Инçех те мар Кăшканар, Ункă юхан шывĕсем шăнкăр-шăнкăр юхаççĕ. Чи малтан ку илемлĕ ял вырăнĕнче Укук ятлă çын пурăнма тытăннă. Çавăнпа таврари çынсем, çак яла пĕлекеннисем, ăна хăйсем хушшинче Укуккасси тенĕ. Укуккассинче ял пуçланнăранпа пĕр çĕр аллă çул иртсен, икĕ енĕпе сахалтан та вăтăр ытла кил пулнă. Хальхи вăхăтра вара икĕ енĕпе те - çитмĕл ытла.

**Арина БОЯРСКАЯ.**

## ЕЛКĂРИ ПУШАР ХĂРУШСĂРЛĂХĔШĔН

Тунти кун район пуçлăхĕ патĕнчи черетлĕ планеркăра çывхарса килекен Çĕнĕ çул ĕлкине пушар хăрушсăрлăхĕпе нормисене пăхăнса ирттересси - тĕп ыйтусенчен пĕри пулнă. Ку тĕлĕшпе контроль тума ятарлă комисси йĕркеленĕ. Поселок тата ял администрацийĕсен, предприятипе организаци, учреждении сен ертӳçисене декабрĕн 25-мĕшĕ тĕлне Çĕнĕ çул мероприятийĕсене хăш вăхăтра, ăçта иртесси пирки район администрацийĕн гражданла оборона тата чрезвычайлă лару-тăру енĕпе ĕçлекен штаба пĕлтермелле. Объектсенче уяв ирттерме массăллăх пухăниччен маларах Патшалăх пушар надзорĕнчен ирĕк илесси пирки хушу панă. Сăмах май, кашни çынах пушар хăрушсăрлăхĕн вăл е ку ыйтăвĕпе кирек хăçан та шанăç телефонĕпе шăнкăравлама пултарать. Унăн номерĕсем: 1) Шупашкар районĕнчи ОГПН 8 (240) 2-16-42

2) Чăваш Республикинчи УГПН 62-32-08

3) УГПН ПУРЦ 8 (343) 216-33-54.

**А.ИЗМАН.**

## КАЙСА КУРТĂМĂР, ПĔЛТĔМĔР, ТĔЛĔНТĔМĔР

Пирĕн паллă ентешĕмĕр Н.Я. Бичурин хăйĕн тĕлĕнмелле пултарулăхĕпе çĕршыв чапне пĕтĕм тĕнче умĕнче çĕкленĕ. Типнерте çуралса ӳснĕскер, Европăри паллă тĕпчевçĕ-академик, публицист-литератор пулса тăнă. Халĕ унăн ятне энциклопедисемпе словарьсене, тĕпчев кĕнекисемпе каталогсене кĕртнĕ. Ăна мухтаса сăвăсемпе поэмăсем, повеçсемпе романсем çырнă, драмăсемпе оперăсем йĕркеленĕ, кино ӳкернĕ, музейсем уçнă. Çакăн пек музейсенчен пĕри вăл - пирĕн районти «Бичурин тата хальхи самана».

Асăннă музее ачасене илсе çӳреме Çĕньял Покровскинчи вăтам шкулта ятарлă график йĕркеленĕ. Çапла майпа унта вĕренекенсем пурте пулса курчĕç.

Н.Я.Бичурин пурнăçĕпе пултарулăхĕ çинчен шкулта тăван ен культури тата литература урокĕсенче вĕрентеççĕ. Çавăнпа та çак музее уçни ачасен тавракурăмне аталантарас тата пĕлĕвĕсене анлăлатса çирĕплетес ĕçре пысăк пĕлтерĕшлĕ. О.Н. Павлова экскурсовод вĕренекенсене Н.Я.Бичурин пурнăçĕнчи интереслĕ фактсем çинчен пысăк хавхаланупа каласа парать. Вара кашни ача куçĕ умне тăван çĕршыва чунтан юратнă, унăн чапне çĕклессишĕн тĕрлĕ йывăрлăхсене çĕнтерсе пынă хаклă ентешĕмĕрĕн сăнарĕ уççăн тухса тăрать.

Кунсăр пуçне музейре пирĕн район историйĕпе, халăхăн культурипе, йăли-йĕркипе паллаштаракан залсем пур. Кашни экспоначĕ вырăнлă, пысăк пĕлтерĕшлĕ, килĕшӳллĕ. А.Яковлевăн «Çут çанталăк илемĕ» темăпа йĕркеленĕ фотокурав та ачасене питĕ килĕшрĕ. «Ара, кун пек илемлĕ вырăнсем хамăр таврарах пур-çке. Мĕнле-ха эпир çавна та асăрхамастпăр?»- тĕлĕнеççĕ вĕсем.

Юлашкинчен çакна каласа хăварас килет. Музей директорĕ И.В.Удалова, О.Н.Павлова экскурсовод тата ытти ĕçченсем питĕ кирлĕ тата усăллă ĕç тăваççĕ. Музейре çав тери хăтлă, çутă, таса, пыракансене тараватлă кĕтсе илсе кăмăллăн ăсатаççĕ.

Эпир, Çĕньял-Покровскинчи вăтам шкулти учительсем тата вĕренекенсем музейре ĕçлекенсене çывхарса килекен Çĕнĕ çул ячĕпе чĕререн саламлатпăр, çирĕп сывлăх, ăнăçу сунатпăр. Музее çӳрекенсен йышĕ нумайлантăр, унăн чапĕ çӳлтен те çӳле çĕклентĕр! Тавах сире.

**Çĕньял-Покровскинчи учительсен тата вĕренекенсен ячĕпе - Т.ГОРБУНОВА.**

❂ Суд залĕнчен

## ĔÇЕКЕНĔН ПĔР ЮРĂ

«Пурăннă тет карчăкпа старик...» Нумай юмах çапла пуçланать. Анчах та юмахри тĕп сăнарсем пурнăçри темĕнле йывăрлăхсене те çĕнтерме пултараççĕ, юлашкинчен телейлĕ пулса юлаççĕ.

Пурăннă тет, пурăннă тет... Паянхи пурнăçри хăш-пĕр сăнарсем юмахрисенчен нумай уйрăлса тăраççĕ. Çăмăл пурнăç юхăмĕпе пырса телейсĕр шăпа авăрне лекеççĕ.

Çĕньялта пурăннă Абуковсем те телейлĕ пулма, ырă пурнăçпа пурăнма шутланă ĕнтĕ. Çемье çавăрса ача-пăчаллă та пулнă. Анчах та лайăххине вĕсем хăйсен аллинчен çулсерен вĕçертсе пынă. Ĕçме те ăс кирлĕ тенĕ те ваттисем, вĕсем ун çинчен питех шутламан пулас. Иккĕшĕ те пĕчĕккĕн-пĕчĕккĕн эрех тыткăнне кĕрсе пынă. Арçын ĕçни çур хуйăх теççĕ, хĕрарăм та ĕçме пуçласан пурнăç пĕтрĕ вара. Кил хуçи арçынни хăй ĕçкеленĕ пулин те арăмĕн ӳсĕррине чăтма пултарайман. Вĕсен хваттерĕнче час-часах кăшкăрашни, çапăçни илтĕннине кӳршисем те тахçанах хăнăхнă. Çакăн хыççăн кил хуçи хĕрарăмĕ кăвак пит-куçпа çӳренĕ. Тахçанах паллă ĕнтĕ, яланах эрех ĕçекен çын тӳрккесленсе, чунĕпе хытса пырать. Нумай чухне хăйĕн хăтланăвĕсене контроллеме вăй çитмест унăн. Ку çемьере те çаплах пулса пынă. Час-часах, эрех ĕçни, пĕр-пĕринпе хирĕçни вĕсенче курайманлăх çуратнă. Кăçалхи июлĕн 12-мĕшĕнче те иккĕшĕ те ӳсĕр пулнă. Арçынни калаă тăрăх, вăл 14 сехет тĕлнелле пӳлĕмрен верандăна тухнă та кунти кровать çинче ӳсĕр арăмĕ çывăрнине курнă. Вăл ăна асăрхаттарса сăмах хушнă. Арăмне ку килĕшмен. Сăмах хыççăн сăмах, тавлашу хĕрсех кайнă.

- Вăл инçех мар выртакан çĕççе ярса илсе ман çине хăмсарма пуçларĕ, эпĕ вара çĕççе туртса илсе ăна вĕлерме мар, хăратма çеç шутланăччĕ,- тет хăйăн сăмахĕнче С.Абуков.

Çапах та арçын хăратма çеç мар, çиллине пусараймасăр ăна чĕре тĕлĕнчен чиксе вилмеллех амантни паллă.

Çак ĕçе пăхса тухнă прокуратура следователĕ М.Багаутдинов ăна вĕçне çитерсе И.Петров судья патне çитерет. Суд ларăвĕ С.Абукова тăхăр çуллăха хупмалла тăвать.

**П.ИВАНОВ.**

Приложение 2
к решению Собрания депутатов Чебоксарского
района от 22 ноября 2005г.

### НОРМАТИВЫ
### Потребления коммунальных услуг населением

| Водоснабжение | | | | Водоотведение | | | |
|---|---|---|---|---|---|---|---|
| в жилых благоустр. домах с централ ГВС куб.м. в месяц на 1 чел ХВС-4,35 ГВС-3,15 | в жилых домах без центр. ГВС с газовым. колонками на 1 чел. куб.м. в месяц на 1 чел. | в жилых домах без ГВС куб.м. в месяц на 1 чел. | в жилых домах с водо-пользов. из водо-разборных колонок, куб.м. в месяц на 1 чел. | в жилых благоустр. домах с централиз ГВС, куб.м. в месяц на 1 чел ХВС-4,15 ГВС-3,15 | в жилых домах без центр. ГВС куб.м. в месяц на 1 чел | в жилых домах без ГВС куб.м. в месяц на 1 чел. | в жилых домах с водо-пользов. из водо-разборных колонок, куб.м. в месяц на 1 чел. |
| 1 | 2 | 3 | 4 | 5 | 6 | 7 | 8 |
| **7,5** | **5,4** | **3,75** | **1,35** | **7,3** | **5,24** | **3,64** | **1,34** |

| Теплоснабжение | | Электроснабжение | | | Сбор и вывоз твердых бытовых отходов куб.м. на 1 кв.м. в месяц | Очистка | |
|---|---|---|---|---|---|---|---|
| Отопление жилых домов централ. систем теплоснаб-жения. Гкал на 1кв.м.в месяц общ.площ. в отопитель период-7мес 1-4,10-12месяцы | централиз горячее водоснаб. в жилых домах. Гкал на 1 чел.в месяц | в жилых домах с газовыми плитами квт.ч на 1 чел. в месяц | в жилых домах с электро плитами квт.ч. на 1 чел. в месяц | в жилых домах с плитами на твердом топливе Квт.ч. на 1 чел в месяц | | **Дворовые туалеты** куб.м. на 1 чел. в месяц | **Выгребные ямы.** куб.м. на 1 чел. в месяц |
| 9 | 10 | 11 | 12 | 13 | 14 | 15 | 16 |
| **0,0317** | **0,16** | **50** | **80** | **55** | **0,00272** | **0,09** | **0,27** |

ОБЪЯВЛЕНИЕ

На основании распоряжений главы администрации Чебоксарского района от 01.11.2005 года № 011-р, 09.11.2005 года № 017-р, 16 декабря 2005 года в 10 часов администрацией Чебоксарского района был проведен открытый аукцион по продаже права на заключение договора аренды земельного участка площадью 0,0071 га с кадастровым номером 21:21:06 12 01:0028, расположенного по адресу: Чувашская Республика, Чебоксарский район, пос.Новое Атлашево, ул.70 лет Октября, д.3/1 (земли поселений), для установки торгового павильона. Начальный размер арендной платы земельного участка: 18700 рублей. Годовой размер арендной платы, установленный в результате аукциона: 19635 рублей. Победитель аукциона: индивидуальный предприниматель Григорьева Светлана Юрьевна.

***Комиссия по проведению земельных торгов (конкурсов, аукционов).***

Коллектив Вурман-Сюктерской СОШ глубоко скорбит в связи со скоропостижной смертью бывшего директора школы, учителя истории

**Владислава Михайловича ГЕРАСИМОВА.**

ТĂВАН ЕН
("КРАЙ РОДНОЙ")
Чебоксарская районная газета

Учредители:
Министерство культуры, по делам национальностей, информационной политики и архивного дела Чувашской Республики,
РГУ " Редакция Чебоксарской районной газеты "Тăван Ен",

Газета зарегистрирована в Управлении Федеральной службы по надзору за соблюдением законодательства в сфере массовых коммуникаций и охране культурного наследия по Приволжскому федеральному округу 8 ноября 2005г. ПИ №ФС 18-2477

429500, Чебоксарский район, пос. Кугеси, ул. Шоссейная, 13.

Газета выходит на чувашском языке, с периодической подачей страниц на русском, два раза в неделю - по средам и субботам.

Гл. редактор В.Т.СОРОКИН

Дежурный по номеру: А.И.ИЗМАН.

Рукописи не возвращаются и не рецензируются. Опубликованные мнения не всегда совпадают с точкой зрения редакции. За достоверность материалов ответственность несут авторы. За содержание рекламы ответственность несет рекламодатель.

Гл. редактор - 2-12-61, зам.гл. редактора - 2-12-59, отдел сельского хозяйства, отдел писем ,отдел общественно-политической жизни - 2-21-88, бухгалтерия - 2-13-80, 2-12-59. E-mail: gazeta@chebs.cap.ru

Номер отпечатан в ГУП "ИПК Чувашия". Тел.21-00-23.

Печать офсетная. Объем 2,0 печ. лист.
Номер подписан в печать: 20.12.2005 г. в 16 час. 00 мин.
Тираж 1700. Заказ № .
Индекс газеты - 54820.